# А. С. ПУШКИН ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔНЧЕ

Иртнӗ ӗмӗрӗн вăтăрмӗш çулӗсенче вырăссен аслă поэчӗ А. С. Пушкин хресченсен «патши» Е. И. Пугачев çинчен роман çырма шутлать. Поэт Пугачев вăрçипе çыхăннă нумай документа вулать, Пугачева хăйне курнă çынсемпе калаçать. Çак шутпах вăл 1833 çулхи августăн 17-мӗшӗнче Питӗр хулинчен Оренбурга тухса каять. Поэт çулӗ Мускав, Чулхула, Шупашкар, Хусан, Чӗмпӗр хулисем урлă иртет.

Сентябрӗн 2-мӗшӗнче А. С. Пушкин Чулхулана çитет, кунта икӗ кун канать те Васильсурск хули урлă Шупашкара каять. Çула май чăваш вăрманӗсене кӗрсе пăхать. Чăваш çӗршывӗнче поэт Станьялти почта станцийӗнче чарăнать. Кунта ун чухне 51 çын çеç пурăннă. Çак станци çинчен А. С. Пушкин каярахпа çапла çырать: «Ялӗ пӗчӗккӗ, халăхӗ питӗ кăмăллă». Вырăнти çынсем А. С. Пушкина мулахай (çӗлӗк) хывса кӗтсе илнӗ, хӗрарăмсем пуçӗсене тайнă. Станьялта лашисене улăштарса поэт малалла Шупашкар енелле çул тытнă.

Сентябрӗн 4-мӗшӗнче, кăнтăрлахи апат вăхăтӗнче, А. С. Пушкин Шупашкара çитнӗ, хула варринчи почта çуртне кӗрсе вырнаçнă, апат çинӗ, лашисене улăштарнă. Хула тăрăх курса çӳренӗ, нумай çынпа калаçнă, Пугачев вăрçи, Шупашкарти вăйлă пушар çинчен тата ыттисем çинчен ыйтса пӗлнӗ. Атăл хӗрринче (хальхи Константин Иванов урамӗнче) поэт вăрахчен тăнă, унтан хула пасарне кӗрсе курать. А. С. Пушкин хăйӗн дневникӗнче çапла çырать: «Кунти çынсем питӗ калаçма юратаççӗ, историе лайăх пӗлеççӗ».

Çав кунах А. С. Пушкин Шупашкартан Хусана тухса каять. Сентябрӗн 4-мӗшӗ ăшă кун пулнă, çавăнпа поэт Кăкшăм шывӗ хӗрринчи Теняков княçăн дачинче чарăнса тăрать.Унтан Шупашкар районӗнчи Анаткас çӗрӗ çинче лашисене шăварать. Кунта питӗ лайăх çăлкуçсем тапса тăнă. Вăйлă çумăр хыççăн пӗр кивӗ кӗпер ишӗлсе анас патнех çитнӗ. Çырма урлă каçма поэта Урай Макаçри икӗ кӗтӳç пулăшнă. А. С. Пушкин вӗсене тав тунă, пӗр çамрăк кӗтӳçӗнчен çапла ыйтнă: «Мӗн ку сирӗн мăй çинче çакăнса тăракан япала?» Кӗтӳç каланă: «Ку — музыка инструменчӗ сăрнай (Шăпăр)». Çавăнтанпа çак çырмана Сăрнай çырми теме пуçланă.

Висӗ лаша кӳлнӗ лав хуçи Ефим Шупашкартан пуçласа Юртукассинчи почта станцине çитиччченех А. С. Пушкина Пугачев вăрçи çинчен каласа кăтартнă. Вăл вырăсла лайăх пӗлнӗ. Яла çитсен поэта хăйсен килне илсе кайнă.

Малалла поэт Исмелти (Октябрьски) еннелле каять. Çул çинче А. С. Пушкин каретин пӗр урапи çӗмӗрӗлсе каять, кунти ăстаçăсем Ефрем кучера лайăх пӗлнӗ, часах çӗнӗ урапа лартса параççӗ. Исмель станцине поэт каç пуличчен çитет, ял хыçӗнче нумай çӳрет, каçхине хăнана каять. Питӗрте пурăннă чухне А. С. Пушкин чăваш ученăйӗпе Никита Яковлевич Бичуринпа паллашнă. Поэт пирӗн ентеш пулăшнипе Китая кайма шутлать, анчах ăна патша ямасть. Пушкин Оренбурга тухса кайсан, Н. Я. Бичурин хăйӗн ăшшӗ ялне Шӗнерпуçне канма килет, çак ялта вӗсем тепре тӗл пулаççӗ.

Шӗнерпуç ялӗнче çав кун туй пулнă. А. С. Пушкин Н. Я. Бичуринпа тата унăн йăмăкӗпе туй курма каяççӗ, чăвашсен пыл сăрине ӗçеççӗ, какай шӳрпи çиеççӗ, поэта шăрттанпа кукăль уйрăмах питӗ килӗшнӗ. Туйра сăрнай (шăпăр) хытă каланă, сăра ӗçсен А. С. Пушкин ташлать. Туй хыççăн поэт çывăрма Исмеле таврăнать, çул çинче ăна ялти йытăсем тапăнаççӗ, поэт вӗсенчен тарнă чухне йӗммине çурать. Висӗ сехет çывăрать поэт Исмелре. Ялта çӗвӗçсем пулман, çӗтӗк йӗмпех поэт Хусан патне çитнӗ.

Хăшпӗр тӗпчевçӗсен шучӗпе, А. С. Пушкин Оренбургран каялла таврăннă чух Шупашкара тепре кӗрсе тухать. Ман шутпа, ку тӗрӗс мар. Поэт каялла урăх, кăштах кăнтăр еннерех, çулпа килнӗ. Чăнах та Чăваш çӗршывне, Пăрачкав район çӗрӗ çине, ура ярса пусать.

Хальхи вăхăтра Пушкин Чăваш çӗршывӗ урлă каçнă вăхăтри вăрмансенчен Станьял патӗнчи патша вăрманӗ çеç сыхланса юлнă. Унта та ӗлӗкхи патша юманӗсем сахал. Поэт каçнă кӗперсен юлашкисем халӗ те пур. Çав шутра — Юртукасси патӗнче пӗчӗк çырма урлă, Станьял (Пӗчӗк Сӗнтӗр) ялӗ патӗнче пысăк çырма урлă хывнă патша кӗперӗ (Пушкин кӗперӗ). Шупашкар хулинче Пушкин каçнă кӗперсене залив тунă чухне ватнă. Пӗчӗк Сӗнтӗрте (Станьялти почта станцийӗнче) Пушкин кӗнӗ çурт çук, ун вырăнӗнче Анат Кинер шкулӗ ларать. Шупашкарта поэт апат çинӗ почта çурчӗ ГЭС тунă чухне хăйăр айне пулнă, Юртукассинче поэт каннă çурт нумаях пулмасть сунса кайнă, ун вырăнӗнче çӗннине кирпӗчрен купаланă. Исмелте (Октябрьски) А. С. Пушкин çывăрнă пӳрте темиçе çул каярах ватнă, ун вырăнне совхоз рабочийӗсем валли общежити туса лартнă.

Чăваш çӗршывӗнче А. С. Пушкинпа çыхăннă вырăнсем нумай, анчах вӗсемпе никам та интересленмест.

**П. НИКОЛАЕВ,**
краевед.